чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

212/26618/ № Кĕçнерни кун, 2014, юпа (октябрь), 23 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

# Тивĕçе кашнин вăхăтра пурнăçламалла

## Чрезвычайлă лару-тăрура – уйрăмах

***Çут çанталăк синкерне пула республикăра регион шайĕнчи чрезвычайлă лару-тăру режимне ĕçе кĕртнĕренпе оперативлă штаб ларăвĕ кашни кунах иртет. Муркаш районĕ ытти муниципалитетпа танлаштарсан ытларах шар курнине шута илсе Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев черетлĕ канашлăва çав тăрăхра йĕркелеме йышăнчĕ.***



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Ĕнер, юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче, Михаил Игнатьев малтан ялсенче пулса курчĕ, аварисен сиенне пĕтерес тĕлĕшпе бригадăсем мĕнле ĕçленипе паллашрĕ. Рыккакасси ялĕнчи Çĕнĕ урамри электропередача линийĕсемпе юписене пĕлтĕр çеç вырнаçтарнă. Ял тăрăхĕн депутачĕ Венера Акимова калнă тăрăх – пăрлă çумăр тата йĕпе юр çунă чухне кабель линийĕсем татăлман, йывăç юпасем вара чалăшнă, вĕсене ял халăхĕ тĕревлеме ĕлкĕрнĕрен пĕри те хуçăлман. Çапах ялта пурăнакансен ытлари кунччен çутăсăр ларма тивнĕ. Çак ялти Александр Родионов хăшĕсем электрогенераторпа усă курни, ватăраххисем çурта çутипех çырлахни, вырăнти çынсем вăй çитнĕ таран тасату ĕçĕсене хутшăнни çинчен каласа кăтартрĕ. Ĕнер Çĕнĕ урамра "Атăл çинчи МРСК" АУОн Саратовран килнĕ ушкăнĕ ĕçлетчĕ: электропередача линийĕсене пăртан тасататчĕ, чалăшнă юписене тӳрлетсе лартатчĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ юсавçăсене ăçта вырнаçтарнипе тата мĕнле çитернипе кăсăкланчĕ. Инçетрен килнĕ специалистсем хăйсене "Сывлăх" ФОКра вырăн уйăрса панине, апат енчен пурте йĕркеллех пулнине систерчĕç. Материала пичете хатĕрленĕ вăхăтра "Чăвашэнерго" представителĕсем Çĕнĕ урамри юсав ĕçĕсене ĕнер 11 сехет тĕлне вĕçленине пĕлтерчĕç.

Михаил Васильевич Москакасси ялĕнче те пулчĕ. Унта Мускав урамĕнчи шыв башни çывăхĕнче çынсем татăлнă проводсене сыпăнтаратчĕç, çĕннипе улăштаратчĕç. Вырăнти тата Куславкка районĕнчен çитнĕ бригадăсем тăрăшсах вăй хуратчĕç, Кировран илсе килнĕ хăпартмалли машинăпа /подъемник/ усă куратчĕç. Михаил Игнатьев ĕç кал-кал пытăр тесен тата мĕн кирлине ыйтса пĕлчĕ. "Материалсем те, çынсем те, техника та – йăлтах пур. Юсава паян вĕçлĕпĕр", – пулчĕ хурав.

Видеоконференци мелĕпе йĕркеленĕ канашлу Муркаш райадминистраци çуртĕнче иртрĕ. Оперативлă штаб пуçлăхĕ, ЧР строительство министрĕ Олег Марков иртнĕ талăкра тунă ĕç калăпăшĕпе паллаштарчĕ. Юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче 6 муниципалитет йĕркеленĕвĕнче юсав ĕçĕсене вĕçлеме май килнĕ. 80 ялпоселока /4500 ытла çурт, 10500 ытла çын/ электроэнергипе çĕнĕрен тивĕçтерме тытăннă. Социаллă виçĕ объект – 3 шкул – хальлĕхе çутăсăр: вĕсенчен 2-шĕ – Муркаш, пĕри Элĕк районĕсенче. Чрезвычайлă лару-тăру режимне ĕçе кĕртнĕренпе пĕтĕмпе 360 ял-поселока электроэнерги панă, вĕсенче 30852 çурт, 74650 çын пурăнать. "Малтанхи пекех, лару-тăру Муркаш районĕнче йывăр, çавăнпа пĕтĕм вăйпа хатĕре ăна пулăшмашкăн яма тăрăшмалла", – терĕ Олег Марков.

Муркаш, Шупашкар, Элĕк тата ытти районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсем аварисене пĕтерес тата çулсемпе тротуарсене юртан тасатас ĕç еплерех пыни çинчен каласа кăтартрĕç. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев чрезвычайлă лару-тăру режимĕ вăхăтĕнче юлхавланма юраманнине, кашни ĕçе вăхăтра тумаллине /çав шутрах çулсемпе территорисене ир-ирех юртан тасатмаллине/, пĕр служба чăхăмлани ыттисене те ура хума пултарнине палăртрĕ. Унсăр пуçне вăл çутăпа усă курайман ял-поселок шутне, ытти цифрăна тăратнă чухне тимлĕрех пулмаллине, çак кăтартусем тăрăх йышăнусем тунине тата тĕллевсем лартнине, синкер сиенне пĕтермешкĕн вăйсемпе тата хатĕрсемпе кирлĕ пек усă курма май панине аса илтерчĕ.

Видеоконференцире Çĕмĕрле хула администрацийĕн пуçлăхĕ Любовь Дмитриева ЖКХ тытăмĕнче энергоресурсемшĕн пухăнса кайнă парăмсене пула йĕркеленнĕ йывăр лару-тăру пирки каласа кăтартрĕ. Михаил Игнатьев хăй çав тăрăхра ĕçлĕ çул çӳревсенче пулнă май хула влаçĕсем умне лартнă тĕллевсем çинчен аса илтерчĕ. Уйрăммăн илсен, вăл Çĕмĕрлене панă хушма пулăшу /120 млн тенкĕлĕх бюджет кредичĕ, муниципалитет парăмĕсене шутран кăларни, 60 млн тенкĕлĕх субсиди/ муниципалитет влаçĕсемшĕн хăйсене лăплантармалли сăлтав пулмалла маррине хула администрацине пĕрре мар аса илтернĕ.

"Эсир хулана пĕрремĕш уйăх ертсе пымастăр. Парăм ыйтăвĕсене усă мероприятисенче – вĕсенче хула пухăвĕн депутачĕсем, организаци-предприяти ертӳçисем хутшăннă – сӳтсе явнă. Эсир çакнашкал лару-тăрăва лекме пултарасси çинчен эпир асăрхаттарнă. Строительство министерствин коллегийĕнче сире кадрсен ыйтăвне вăраха ямасăр татса пама, ЖКХпа строительство ыйтăвĕсемпе ĕçлекен енсене вăйлатма сĕннĕ. Эсир çакăн пирки лару-тăрăва тытса пыма май килми пулсан тин шухăшлама пуçларăр. Халĕ вара Межрегионгаз исполнитель хутне каялла илтĕр тесе ыйтатăр. Эпĕ ыйтăп, анчах ку нимĕн те памасть. Хăвăр парăмсене сирĕн çуллахи вăхăтрах татмалла пулнă. Хула администрацийĕн пуçлăхĕ пулнă май эсир йывăрлăхсем ан тухчăр тесе мĕн тунă? Хăвăрăн ĕнер мĕн тумаллине эсир пурнăçламан. Халĕ вара хăвăрăн йывăрлăхсене правительство çине куçарасшăн. Çĕмĕрле хулин хăйĕн бюджечĕ пур, саккунпа килĕшӳллĕн вырăнти влаçăн тата ĕç тăвакан влаçăн полномочийĕсене уçăмлăн палăртнă. Çавăнпа темăна политикăпа çыхăнтармалла мар, ку ыйтусем хула хуçалăхĕн. ЧР Министрсен Кабинечĕ хăй çине илнĕ обязательствăсене эпир пурнăçларăмăр. Малалла хула хуçалăхне хăвăр тытса пырăр. Кредитсем илĕр, парăмăрсене татăр. Хăвăрăн тӳрĕ тивĕçĕрсене лайăх пурнăçламалла, йывăрлăхсем çуратмалла мар", – ăнлантарчĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА

# Яваплисем çывăраççĕ те...

## Çавăнпа çулсене юр хĕвет

***Кун йĕркинчи ыйтусем самай йышлă пулчĕç-ха та, çапах ЧР Министрсен Кабинечĕн ĕнерхи ларăвĕ тăсăларах кайни урăххипе сăлтавланчĕ. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ирхине Муркаш тăрăхĕнче пулнă – унтан кăмăлсăрланса таврăнни сисĕнчĕ. Кăмăлне пăснă хăш-пĕр саманта вăл ларура та çĕклерĕ. Тĕрĕссипе, çакă пĕтĕм ларăва витĕм кӳнĕн те туйăнчĕ: темиçе министра пайăррăн сăмах тиврĕ – служба тĕрĕслевĕсем ирттерме хушни таранах.***

Транспорт министрĕ Владимир Филиппов хăй ертсе пыракан ведомство ĕçĕ-хĕлĕ çинчен отчет турĕ. Вăл трибуна патне утнă чухнех Михаил Игнатьевăн сăмахĕсем сисчĕвлентерчĕç: «Çул-йĕр хуçалăхĕ мĕнле ĕçленине паян тĕрĕслерĕм – чăхăмлать...» Владимир Иванович вара сăмахне ним пулман пек пуçларĕ-ха: республикăри çулсене юсани, çĕнĕ çулсем туни, çак ĕç валли мĕн чухлĕ укçа уйăрни... Чăваш Ен Пуçлăхĕ çул тăвакансене бракшăн мĕнле виçелĕх штрафланипе кăсăкланса такăнтарчĕ. Пĕтĕмпе те 8,9 пин тенкĕлĕх кăна штрафланă иккен.

«Министерство мĕнешкел пысăк ĕç тунă – 8 пин тенкĕлĕх штраф!» – тĕлĕнчĕ Михаил Васильевич. Министр тӳрре тухма тăчĕ – çук, Пуçлăха витереймерĕ, Михаил Игнатьев кăмăлсăрланнине кăтартса пуçне сулкаларĕ кăна. Тепĕр тесен штрафсемпех çыхăннă тепĕр тема унăн кăмăлне кăштах çавăрчĕ пулас. Министр çулсем çинчи йĕркелĕхе сыхлас енĕпе фотофиксаци приборĕсем лартни пирки каласа пачĕ. Пĕлтĕр çав приборсен кăтартăвĕсем тăрăх кăна йĕркене пăснисене штрафлама 286 пин йышăну тунă-мĕн, штрафсен пĕтĕмĕшле виçи – 135 млн яхăн тенкĕлĕх. Çавна май Чăваш Ен Пуçлăхĕ асăннă йышши приборсене тата та ытларах лартмалли пирки каларĕ, вĕсем пулăшнипе пухакан штрафсемпе шăпах çак ĕç валли усă курмалла.

Çул-йĕрпе çыхăннă ĕç-пуça хакланă май вара вăл ирхине Муркаш районĕнче пулни çинчен пĕлтерчĕ – çĕр каçа çуса лартнă юра тасатассишĕн яваплисене ӳпкевлĕ сăмах тиврĕ: «Муркашра хăйĕнче тасатнă. Федераци трассине вара тасатман. Мĕншĕн хатĕр пулман? Мĕншĕн техникăн пĕчĕк пайне кăна ĕçе явăçтарнă? Пуçлăхсем çывăраççĕ – вĕсен служба машинисем лайăх, çумра темиçешер кĕсье телефонĕ... Халăх социаллă пурнăç енĕпе хăйне мĕнлерех туясси, вăл влаçа шанасси шăпах çакăнтан килет!»

Владимир Филиппов федераци трассине тасатассишĕн яваплă компание ятранах асăнчĕ. Вăл техникăн 35 единицине ĕçе кăларнă-мĕн, анчах çула сапмалли хăш реагентпа усă курмаллине тĕрĕс хаклайман.

> ✔ «МИНИСТЕРСТВО МĔНЕШКЕЛ ПЫСĂК ĔÇ ТУНĂ – 8 ПИН ТЕНКĔЛĔХ ШТРАФ!» – ТĔЛĔНЧĔ МИХАИЛ ВАСИЛЬЕВИЧ

Кунашкал хурав Михаил Васильевича тивĕçтермерĕ: «Юр ирĕлсе кайĕ те – вĕсем ĕç тунă пек кăтартĕç, эпир вара укçа куçарăпăр, çапла-и? Халĕ ак çакна пула çулсем пăрлакланĕç, транспорт 3-4 километрлă «пăкăсенче» лакса ларĕ. Чăваш Ен урлă иртекенсем тарăхĕç. «Чăваш Ене кам ертсе пырать – Игнатьев», – тейĕç!»

Калаçăва çивĕчлетнĕ ыйтусем татах та пулчĕç. Ветеринари сферинче ĕçлекенсен шалăвне ӳстермелли положение сӳтсе явнă май Патшалăх ветеринари службин ертӳçине Сергей Скворцова сăмах тиврĕ. Кирлĕ документа тăратассине тăсса янине пула Михаил Игнатьев служба тĕрĕслевĕ ирттерме хушрĕ.

Республикăн 2020 çулччен хи инвестици стратегине улшăнусем кĕртессине пăхса тухнă май Михаил Васильевич пысăк хăвăртлăхлă чукун çул магистральне тăвассипе çыхăннă ыйтусене тĕплĕнрех палăртмалли пирки каларĕ. Çавăн пекех ăна производствăра ял хуçалăх, апат-çимĕç продукцийĕн тӳпи пĕчĕкки те тивĕçтермест. Çавна май ял хуçалăх министрне асăрхаттарчĕ: «Кăçал апат-çимĕç тӳпине чакарма юрамасть. Апла тăк сирĕн хăвăрăн интерессене çине тăрса лоббилемелле».

Культура ыйтăвĕсенчен те пăрăнса иртмерĕç. Пушă вăхăта ирттермелли, канмалли учрежденисем валли оборудовани туянас ыйту тавлаштармарĕ. 25 учреждени валли 400-шер пин тенкĕ уйăраççĕ. Çитес çул Константин Иванов поэт çуралнăранпа 125 çул çитнине уявлас енĕпе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕпе çыхăннă ыйтăва çĕкленĕ май вара Михаил Васильевич культура министрне Вадим Ефимова хушу пачĕ: «Константин Иванов çамрăклах илемлĕ хайлавсем çырнă, вĕсене эпир шкултах пăхмасăр вĕреннĕ. Çитес çул вĕçленнĕ тĕле çавăн пек пултаруллă ачасене кăтартма пултарăр». «Юрать», – иккĕленерех /çулталăкра çĕнĕ Иванова мĕнле çуратмалла текен ыйту шухăшлаттарчĕши?/, çавăнпа пуль пăшăлтатнăн каларĕ министр.

Тепĕр служба тĕрĕслевĕ ирттерессине вара Экономика аталанăвĕн министерстви сăлтавларĕ. Министрсен Кабинечĕн маларах тунă йышăнăвне улшăну кĕртме хатĕрленнĕ май килĕштермешкĕн проекта Финанс министерствине панă, Правительство ларăвне вара проектăн урăх редакцине тишкерме тăратнă иккен. Те йăнăшпа, те ăнсăртран... Апла-и, капла-и – Михаил Васильевич хĕрхенсе тăмарĕ: «Икĕ министерство хушшинче унашкал тавлашусем пулмалла мар. Кунашкал пăтăрмахсем ан пулччăр!» Çавна май проекта йышăнмарĕç. Çийĕнчен тĕрĕслев кăтартăвĕсем тăрăх айăплисене те тивĕçлипех лекет-тĕр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2015 çулăн I çурри валли Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ. «Хыпар» – 732 тенкĕ те 66 пус. «Хыпар – шăмат кун» – 304 тенкĕ те 08 пус. Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене «Чăваш пичечĕн», «Советская Чувашия» хаçатăн киоскĕсенче, «Хыпарта» туянма тата çырăнма пулать.**

## Халăха пĕлсе тăма

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи бюджетпа çыхăннă право хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен» саккунĕн 96[1], 96[2], 96[3], 96[4] статйисемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2014 çулхи чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш Республикин 2015 çулхи, планпа пăхнă 2016 тата 2017 çулсенчи республика бюджечĕн проекчĕ пирки халăх итлевĕ ирттерет.

Республика бюджечĕн проектне «Республика» хаçатăн 2014 çулхи юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн официаллă сайтне /gs.cap.ru/ вырнаçтарнă.

Чăваш Республикин 2015 çулхи, планпа пăхнă 2016 тата 2017 çулсенчи республика бюджечĕн проекчĕпе çыхăннă сĕнӳсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашне 2014 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр çак адреспа ярса пама ыйтаççĕ: 428004 Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10 çурт.

Халăх итлевĕ Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕнче /Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17 çурт/ иртет.

10 сехетре пуçланать.

Çыхăнмалли телефон: 64-21-64 хушăм 1028, 64-21-65.

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнчи 139-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн "Шупашкарти промышленноç тракторĕсен завочĕ" акционерсен усă обществин ĕçченĕсене – технологи оборудованине юсакан службăн технологи оборудованине юсакан тата сăнасаасăрхаса тăракан 2-мĕш участокĕн аслă мастерне **Николай Александрович ГЕРАСИМОВА,** механикăпа сварка цехĕн термистне **Сергей Вениаминович ЗОТИКОВА,** техника директорĕн службин ăслăлăх-тĕпчев управленийĕн ертсе пыракан инженерне **Валентина Вячеславовна СЮБАЕВĂНА – "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.





## Сайт ĕçлеме пуçланă

***2015 çулхи çĕртме уйăхĕн 20-21-мĕшĕсенче Шупашкарта çăмăл атлетика енĕпе иртекен командăсен Европа чемпионачĕн сайчĕ ĕçлеме пуçланă.***





Ăна Мускав программисчĕсем хатĕрленĕ. Сайта тĕрлĕ хыпарпа пуянлатассипе Пĕтĕм Раççейри çăмăл атлетика федерацийĕ ĕçлет. Унта ăмăртăва епле хатĕрленни, турнира камсем хутшăнасси тата хăна çурчĕсем çинчен вуласа пĕлме пулать. Сайтра çавăн пекех Европа чемпионачĕн кун-çулĕпе, Шупашкар хулинчи паллă вырăнсемпе тата унăн историйĕпе паллашма май пур. Çывăх вăхăтра ăмăртăвăн страницинче билетсем сутас енĕпе ятарлă программа старт илĕ. Унăн адресĕ: www.cheboksary2015.ru.

Аса илтеретпĕр: командăсен чемпионатне 2009 çултанпа йĕркелеççĕ, унта Европăри чи вăйлă 12 команда хутшăнать. Çав йышра Раççей спортсменĕсем те пур. Тепĕр çул сумлă ăмăртăва Шупашкар йышăнĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Чĕлхесĕр наци пурăнаймасть



***Çамрăксен театрĕнче ача-пăча наци драматургийĕн регионсен хушшинчи лаборатори-форумĕ уçăлнă. Унăн ертӳçи – театр критикĕ, искусствоведени кандидачĕ, Раççейри чылай хулара тĕрлĕ семинар йĕркеленĕ Ирина Мягкова.***

Форума Чăваш Ен, Пушкăртстан, Екатеринбург, Санкт-Петербург, Мускав драматургĕсем хутшăнаççĕ. Лаборатори умĕнхи конкурса Удмурт, Коми республикисен, Мускав, Питĕр, Новосибирск, Екатеринбург, Самар, Чĕмпĕр, Анапа, Калуга, Воронеж тата ытти хулари, Беларуç, Литва авторĕсем 60 ытла ĕç тăратнă.

«Театр лабораторине наци чĕлхин çивĕч ыйтăвĕсене халалланă. Паян наци драматургĕсем питĕ йывăр лару-тăрура: вĕсен ĕçĕсене пăхакан та, сцена та çук. Чĕлхесĕр наци пурăнаймасть, наципе культура пĕрлĕхĕ сыхланса юлаймасть. Ача тăван чĕлхене чи малтан çемьере вĕренет, унтан – театрта, кинора. Çавăн пекех тăван чĕлхепе мĕн çырни те пĕлтерĕшлĕ. Пьесăсене професси драматургийĕн куçĕпе пăхса хаклăпăр», – палăртнă Ирина Мягкова форума уçнă май.

Лабораторире артистсем пьесăсене вулĕç, унтан пурте пĕрле сӳтсе явĕç. Çавăн пекех форум программипе килĕшӳллĕн Наци спектаклĕсен фестивалĕ иртет. Унта Калмăк Республикин Б.Басангов ячĕллĕ драма театрĕ те хутшăнать.

**И.СЕРГЕЕВА.**

### Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать, кăштах юр çăвать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 7 градус, çĕрле 9 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 63 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 53 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, юр çукалать. Çил çурçĕртен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 9 градус, çĕрле 12 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 763 мм, сывлăшри нӳрĕк 70 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 48 минут.**

# «Чăваш биоçимĕçĕ»: унта нимĕн те хушманнине, пахалăхне экспертсем тĕрĕсленĕ

***Тавар пахалăхĕ тата ăна туса кăлараканĕ – лавккасенче пĕр-пĕр япала туянас умĕн эпир чи малтанах çаксене пăхатпăр. Тем те пĕр хушмасăр апат-çимĕç хатĕрлеме тăрăшакан вырăнти тавар туса кăларакансене пулăшас тĕллевпе икĕ çул каялла республикăра «Чăваш биоçимĕçĕ» суту-илӳ маркине хатĕрленĕ. Паян 5 предприяти тата 7 тĕрлĕ продукци «Чăваш биоçимĕçĕ» стандарт ыйтнисемпе килĕшӳллĕн ирĕклĕ сертификат илнĕ. Вĕсенчен 3 продукцие Чăвашпотребсоюз предприятийĕсем туса кăлараççĕ.***




### Пур тапхăрта та тĕрĕслев

Хăйĕн продукцийĕн чĕркемĕ çинче çак сарă-симĕс паллăпа усă курмалли ирĕке илмешкĕн тавар туса кăларакансем регионти ирĕклĕ майпа сертификацилекен «Пахалăх» чăваш марки» тытăмне пынă. Шăпах унта суту-илӳ стандартне тата унпа усă курмалли йĕркесене хатĕрленĕ.

– «Чăваш биоçимĕçĕ» Чăваш Енре органика çимĕçĕсен тĕп паллисене тивĕçтерекен, нимĕнпе те хутăштарман апат-çимĕç чĕр таварĕнчен туса хатĕрленĕ выльăх-чĕрлĕх е ӳсентăран çимĕçĕ пулнине пĕлтерет, – ăнлантарать сертификаци енĕпе ĕçлекен орган ертӳçи Анна Гольдштейн. Кунсăр пуçне палăртнă санитари тата ветеринари нормисене çирĕп пăхăнма, экологи хăрушсăрлăхĕпе менеджмент ыйтнисене шута илме тивĕçлĕ.

Тавар паллипе усă курмалли ирĕк валли сертификат панă май экспертсем продукци пахалăхне, ăна туса кăларнин пысăк стандартне, тĕрлĕ хушăм, синтетика сăррисем, çимĕçе ырă шăршă кӳрекен япаласем çуккине çирĕплетеççĕ. Тавара паллă тăвас, турттарас тата упрас тĕлĕшпе те çирĕп ыйтаççĕ.

– Мĕн пур продукцие экспертсен ушкăнĕ ятарласа тĕрĕслет, – тет Анна Владимировна. – Тĕрĕслев вăхăтĕнче документсене, производство технологине тата ыттине те тĕплĕн тишкереççĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе сертификат парасси е пама килĕшменни çинчен йышăну тăваççĕ.

Сертификат парсан та çак тытăм эксперчĕсем продукцие тĕрĕслесех тăраççĕ.

### Хисеплĕ, çапах та яваплă

Чăваш Енри потребительсен кооперацийĕн предприятийĕсем республикăра хăйĕн продукцийĕн пысăк пахалăхне, тĕрлĕ хушăмсăр пулнине, хăрушсăрлăхне çирĕплетсе панă. «Пахалăх» тытăмĕн эксперчĕсен никама пăхăнман хаклавĕ çирĕплетнĕ тăрăх – Чăвашпотребсоюзăн Етĕрнери аш-какай комбиначĕ туса кăларнă «Уяв шăрттанĕ» «Чăваш биоçимĕçĕ» логотипа тивĕç.

– Пирĕн предприяти 100 ытла тĕрлĕ кăлпасси, аш-какай продукцийĕ, çурма фабрикат кăларать, – тет Етĕрнери аш-какай комбиначĕн» директорĕ Сергей Якушев. – Тĕпрен илсен харпăр хăйĕн хушма хуçалăхĕсен ашĕпе усă куратпăр. Пирĕн лабораторисем продукци пахалăхне тĕплĕн тĕрĕслеççĕ. «Чăваш биоçимĕçĕ» тавар паллипе продукци кăларни хисеплĕ кăна мар, яваплă та.

Çакнашкал тавар паллине çавăн пекех Чăвашпотребсоюзăн «Кооператор» обществи хатĕрлекен «Директорская» минерал шывĕн тата Хĕрлĕ Чутай районĕн «Янтарь» обществи туса кăларакан хурăн сĕткенĕн савăчĕсем çинче те курма пулать.

Сăмах май, Чăваш Енри потребительсен кооперацийĕн предприятийĕсемпе организацийĕсем республикăра хатĕрлекен эрехсĕр шĕвексен пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 52% туса кăлараççĕ, ку кăтартупа Раççей Центросоюзĕн тытăмĕнче малтисен йышĕнче.

Чăваш Республики – Раççейре хăйсен суту-илӳ маркине хатĕрлесе ĕçе кĕртнĕ пирвайхи регионсенчен пĕри. Çавăн пекех республикăра «Вырăнтине суйла – хамăрăнне туян!» акци иртереççĕ.

■ **Нина АНТОНОВА**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# Ăçта эсĕ, кĕрĕк ăсти?

## Тĕллевлĕ программа отрасле тĕревлĕ

Ку ыйту юлашки çулсенче çĕр-шывĕпех каларать. Шухăша яраканни – иртнĕ 20-22 çулта сурăх йышĕ, унран продукци туса илесси палăрмаллах чакни.

Чăваш Енри лару-тăру Раççей çак отрасле епле аталантарнипе тачă çыхăннă. Никама пăхăнман патшалăхсен пĕрлĕхĕнчи /НППП/ çĕр-шывсенче иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче сурăх шучĕ чи пысăкки пулнă – 153 млн, халĕ – 35. Казахстанра, Украинăра, Кăркăстанра 4 хут чакнă. Раççейре 63-рен 14,8 миллион юлнă /çак шутра уйрăм çынсен – 9, тĕрлĕ тытăмри ял хуçалăх предприятийĕсен – 4,4, хресчен-фермер хуçалăхĕсен – 1 млн ытла/.

Сурăх сахалланнин тĕп сăлтавĕ – çĕршывра çăм кирлĕ пулма пăрахни. Тĕрĕсрех, пир-авăр предприятийĕсем ăна пахалăхĕ тивĕçтерменнипе туянман. Чĕр тавар пухăнсах пынă. Раççей 1994 çулта таможня тӳлевне пăрахăçланă хыççăн чикĕ леш енне 157 пин тонна çăм ăсатнă. Çав вăхăтрах пусма тавар предприятийĕсем ăна 45 пин тонна туяннă, тĕпрен илсен – меринос сурăхăнне. Мĕншĕн тесен промышленноçа вĕтĕ е çурма вĕтĕ çăм çеç кирлĕ. Çакна тĕпе хурса хуçалăхсен малашне тĕллевлĕн ĕçлемелле: ăратне кура е ашĕшĕн, е çăмĕшĕн.

Ĕлĕк хатĕрлев кантурĕн агенчĕсем киле пырсах тир пуçтарнине аслăрах ăрурисем ас тăваççĕ пулĕ. Халĕ вăл никама та кирлĕ мар. «Хĕлле ура шăнасран мунча алăкĕ умне сарма юрать ĕнтĕ», – шӳтлет ялти пĕлĕшĕм.

Тĕрĕссипе, пир-авăр промышленноçне çăм кирлех. Раççей, ытти чылай çĕршывпа танлаштарсан, çурçĕререх вырнаçнă. Пирĕн патра çĕр мамăк çитĕнмест. Синтезласа сӳс туса кăлараççĕ. Чăн та, унпа çеç усă курма юрамасть. Çăмпа хутăш арламалла. Экспертсем çирĕплетнĕ тăрăх – пусма тавар промышленноçне çăмпа, халăха ашпа тивĕçтерме çĕршывра çуллен 30-35 млн сурăх çитĕнтермелле. Çак тĕллеве 2020 çул тĕлне пурнăçлама май пур.

Сурăх йышĕ 2015-2030 çулсенче тĕнчере 1,1-1,3 млрд шайĕнче тăрĕ. Çакă çителĕклĕ. Аш туса илесси ӳсет, çăм кăштах чакать. Унăн саппасĕ Австралире, Аргентинăра, Уругвайра, Индире темиçе çул усă курмалăх. Раççей юлашки çулсенче ăна чикĕ леш енне ăсатма пăрахнă, хăй НППП çĕр-шывĕсенчен чи паха сортлине туянать. Ытти патшалăхран 15 пин тонна çăм /хамăр производствăн 27,5%/, 66,7 пин тонна аш /17%/ илет. Импорт çулне пӳлме ăратлăха çине тăрсах лайăхлатмалла, хамăрăн сурăх тирĕнчен кĕрĕк çĕлессине аталантармалла. Хĕлле ăшă тумтире пурте аса илетпĕр мар-и? Пасарта е лавккара Чăваш Енре хатĕрленĕ кĕрĕк шыраса хăшкăлатпăр, вăл вара çукпа пĕрех. Ăна хатĕрлекен ăстасем ăçта кайса кĕнĕ? Тĕрĕс хуравлакан тупăнĕ-ши? Темĕн, иккĕлентерет. Пур-ха республикăра «Кĕрĕк» предприяти. Анчах вăл ку ыйтăва хăй тĕллĕн çеç татса параймĕ.

Ырă пулăм савăнтарать – РФ Ял хуçалăх министерствин Выльăх-чĕрлĕх департаменчĕ Раççейре Выльăх пăхакансен союзне йĕркеленĕ. Вăл сурăх ĕрчетес ĕçе пысăк витĕм кӳрессе шанас килет.

Пирĕн республикăра лару-тăру еплерех? Тӳрех калатăп: отрасль малашлăхĕ савăнтарать. Чăваш Енре РФ Правительствин 2012 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнчи «2013-2020 çулсенче ял хуçалăхне аталантармалли тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварпа апат-çимĕç рынокне йĕркелемелли патшалăх программи çинчен» йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн 2013-2015 çулсенче сурăх ĕрчетес отрасле тĕллевлĕ аталантарма ятарлă программа йышăннă. Геннадий Кузнецовăн /«Хыпар», 206 №, 16.10.2014 ç., «Пĕрлехи хуçалăхра сурăх мĕншĕн усрасшăн мар?»/ текех пăшăрханма тивмĕ. Тĕллевлĕ программа отрасле тĕревлетех.

Унпа килĕшӳллĕн республикăра çăмлă чĕр чун усрама тивĕçлĕ услови туса хумалла, производство техникипе технологине çĕнетсе ку чухнехи шая çитермелле, ял хуçалăх предприятийĕсен сурăхран илекен продукци конкурентлăхне ӳстермелле, ăратлă кĕтӳ çитĕнтермелле, паха апат никĕсне туса хатĕрлемелле, специалистсем, тир тăвакан ăстасем вĕрентсе кăлармалла.

2009-2012 çулсенче Чăваш Енри ял хуçалăх организацийĕсенче /ЯХО/ сурăх йышĕ – 69,5%, ХФХсенче 2,6 хут ӳснĕ, аш туса илесси ЯХОсенче çав шайрах юлнă, ХФХсенче 11 хут хушăннă. Халĕ 65 ЯХОпа ХФХ сурăх ĕрчетеççĕ /2008 çулта – 80 ытларах/. Малашне кăтарту хушăнмаллах.

2009 çулта ЧР пĕтĕм тытăмри хуçалăхсенче 171,6 пин пуç шутланнă, 2012 çулта – 179,7 пин, вăл шутра ЯХОсенче – 2,3 пин тата 3,9 пин, ХФХсенче – 1,7 пин тата 4,5 пин пуç. Пĕтĕм йышăн 95 процентне ял халăхĕ ĕрчетет.

Программа çавăнпа та ЯХО тата ХФХ пысăк витĕм кӳрес тĕллевлĕ. 2013 çулта вĕсем пĕрле 7,5 пин пуç сурăх тытнă, 2015 çулта кĕтĕве 14,04 пине çитермелле, 2013 ç. – 60,5 тонна аш туса илнĕ, 2015 ç. кăтартăва 167,2 тоннăна çитермелле. 2013 ç. 5,7 тонна çăм туса илнĕ, 2015 ç. 18,94 тонна пулмалла тата 68 хушма ĕç вырăнĕ тумалла.

Çамрăк усламçăсем отрасль çине алă сулманни аван. Тĕслĕхрен, Вăрмар районĕнчи Сергей Грачев предприниматель кĕрĕклĕх тирлĕ ăрат ĕрчетет. Пĕлтĕр 15 пуç кăначчĕ унăн. Патшалăх «Ĕçе тытăнакан фермера» 700 пин тенкĕпе пулăшнă. Сергей Грачев нухратпа ферма тунă, трактор, 120 путек туяннă. Романов ăрачĕллĕ сурăх çулталăкра 2 хут пăранлать. Кил хуçи çывăх вăхăтра 500 пуçа çитересшĕн.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

ЫРĂ ĔÇ

# Аллея туслăха çирĕплетĕ

***Патăрьелсене энергетиксем пысăк парне кӳчĕç. «РусГидро» АУО тата унăн тытăмне кĕрекен Чăваш энергосбыт компанийĕ укçа-тенкĕпе пулăшнипе Чăваш Енре кăна мар, Раççейре те чи пысăккисен шутĕнчи тутар ялĕпе, Шăнкăртампа, юнашар Туслăх аллейине хывнă. Иртнĕ эрне кун ăна савăнăçлă лару-тăрура уçрĕç.***




Ку вырăна ăнсăртран суйламан. «ЧЭСК» АУОн Патăрьелĕнчи филиалĕн директорĕ Дмитрий Гаврилов каланă тăрăх – районта электроэнергишĕн сĕмсĕррĕн тӳлеменнисем çук, çынсем, предприятисем энергокомпани умĕнчи тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ, киловатсен çухатăвĕ те норма шайĕнче. Çакнашкал ĕçтешлĕхе, паллах, энергетиксем тивĕçлипе хаклаççĕ.

Çапах ку парне Шăнкăртамсемшĕн кăна мар. Тирпейлеме çĕр-çĕр пин тенкĕ хывнă çак территори çумĕнче хĕресленекен çулсем Патăрьел тăрăхне Комсомольски, Йĕпреç, Улатăр районĕсемпе çыхăнтараççĕ. Кунта авалтанпах чăвашсем, тутарсем, вырăссем, ытти халăх çыннисем çăннă. Калăпăр, ватăсем аса илнĕ тăрăх, кунти пусса иртнĕ ĕмĕр варринчех чавнă. Педагогика ветеранĕ Памир Салихов çынсем ĕçмелли шыв ăсма тахçантанпах çакăнта çӳренине çирĕплетет: «Çак шывран чей питĕ тутлă пулать». Пусă шăрăх та çумăрсăр 2010 çулта та, нумай çăл куç пĕтнĕ чухне, типмен. Апла пулин те ăна тĕплĕн тирпейлеме алă çитмен. Халь вара энергетиксем тăрăшнипе пĕтĕмпех улшăннă.

Çил арманĕ çĕкленĕ: çӳллĕскер, çунатлăскер – чăнни пекех! Хресченсен ĕлĕкхи пурнăçне сăнлакан ӳкерчĕкрен куçнă тейĕн – чăннипех парк илемĕ! Шăпах çав арманта хайхи пусă «пытаннă». Брусчаткăран тунă сукмак, шалта бетон янă урай, витре лартмалли вырăн – вактĕвеке те шута илнĕ. Электролини те карнă. Текех пылчăк çăрмалла пулмĕ, çил-çумăртан пытанма та пулать.

Арман стени çинчи табличкăри сăмахсем пысăк пĕлтерĕшлĕ: «Ĕçмелли шыв çăл куçĕ вырăнĕнчи пусăсене çынсем авалтанпах хисепленĕ, унти шыв сăваплă тесе шухăшланă. Çĕр айĕнчен тапса тухакан çăл куç шывне ĕçсен çын çĕр хăватне илнине ĕненнĕ». Паллах, «РусГидро» АУО ятне çырса логотипне ӳкернĕ – пусса вăл пулăшнипе çапла çĕнĕ сăн кӳнĕ-çке.

## Константин АФАНАСЬЕВ, «ЧЭСК» АУОн ĕç тăвакан директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан:

***– Экологи акцийĕсем пирĕн компанишĕн ырă йăлана кĕчĕç. Çав шутра – Атăла пулă яни, Шупашкарти çăл куççене тирпейлени тата ыт. те. Çак аллея Патăрьел çĕрне илемлетессе, çут çанталăка упрама пулăшасса тата, паллах, хăйĕн ятне тӳрре кăларасса – çынсен туслăхне çирĕплетессе шанатпăр. Пирĕн ырă ĕçсен пуххинчи çак аллея энергокомпанишĕн шучĕпе иккĕмĕш пулчĕ – пĕлтĕр Шупашкарта Энергетиксен аллейине турăмăр. Пирĕн яваплăх зонинче – пĕтĕм Чăваш Ен. Çавăнпа та кунашкал акцисене республикăри ытти хулапа районта та irттерĕпĕр.***

килĕштерсе пурăнаççĕ. Çак вырăнсемпе иртнĕ май кӳршĕ ялсемпе районсен çыннисем те кунта чарăнĕç – паркпа киленме, çул çинче канса илме. Çавăнпах энергетиксем суйласа илнĕ ят та пĕлтерĕшлĕ – Туслăх аллейи.

Парка ял тăрăхĕнче пурăнакансем пуçранипе виçĕ çул каяллах уçнă. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем те тӳпе хывнă – çуркунне парламент комитечĕсенчен пĕрин ларăвне кунта ирттернĕ май йывăççем лартнă. Çапах энергетиксен парни уйрăмрах: парка тирпейлессине вĕсем чăннипех çанă тавăрса пуçăннă.

Хĕрлĕ хăйăва касрĕç те – çĕнелнĕ пусăран ăснă шыва чи малтан ас тивмелли хисепе хаклă хăнасем, Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Глухов тата Чăваш энергосбыт компанийĕн ĕç тăвакан директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Константин Афанасьев, тивĕçрĕç. Николай Иванович «хамăрла, ялтилле» турĕ – сивĕ шыва витреренех ĕçрĕ. «Тутлă!» Константин Васильевич та унран юлмарĕ – унăн хаклавĕ те çавнашкалах. Дегустаци ăнăçлă иртрĕ. Çапла пулмасăр! Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Марат Айзатуллов каланă тăрăх – «пусăри шыва тĕпченĕ, экспертиза унăн пахалăхне çирĕплетнĕ – пур енĕпе те таврара чи лайăххи».

Çăкăр-тăвар тата, паллах, чак-чак ас тивнĕ хыççăн хăнасем алла кĕреçе илчĕç. Хайхи Туслăх аллейинчи туя йывăççисене кăшт маларах лартнă. Хунавсене ятарласа Шупашкарти питомникрен кӳнĕ. Анчах темиçе хунав хăварнă – «юлашки пăнча» энергокомпанипе район ертӳçисем лартчăр тенĕ ĕнтĕ. Вĕсемшĕн вара çакă та кăмăллă ĕç иккен: нумай та вăхăт иртмерĕ – йывăççен илемлĕ речĕсенче тата темиçе туя хушăнчĕ. Акă тутар наци тумне тăхăннă хĕрсемпе хĕрарăмсем – Шăнкăртамри культура çурчĕн уява илем кӳнĕ «Шатлык» /Савăнăç/ юрăпа ташă ансамбльне çӳрекенсем – кĕвентесемпе /ку сăмах тутарла та чăвашăннипе пĕр сасăллă иккен – «кювенде»/ хайхи пусăран шыв ăсса та килчĕç. Тин лартнă йывăççене шăварчĕç.

Халĕ кунта виçĕ теçетке туя. Аллейăна ытараймасăр пăхнă май Николай Глухов энергетиксене чĕререн тав турĕ: «Шел те, пирĕн кăмăл пулсан та вырăнти бюджет майĕсем хамăрăн ял тăрăхĕсен территорийĕсен аталанăвĕпе çыхăннă мĕн пур ыйтăва хăвăрт, пысăк пахалăхпа татса пама çителĕксĕр. Манăн шухăшпа – пире ăнчĕ, РусГидро, Чăваш энергосбыт компанийĕ шăпах пире суйласа илчĕç, çак парка тирпейлеме самай пысăк укçа хыврĕç. Тавах вĕсене».

Тепĕр самант: асăну чулĕ Туслăх аллейин паллă вырăнĕсенчен пĕри пулса тăрать-тĕр. Ăна, республикăн тĕп хулинчи Энергетиксен аллейинчи пекскере, хатĕрлемешкĕн энергокомпани саккас панă ĕнтĕ. Ун çинче те икĕ алă – çитĕннĕ çын тата ача аллисен – йĕрĕ пулĕ. Энергетиксем шантараççĕ: çав йĕрсем çине алла хурсан çын хĕвел энергине илет.



■ **Николай КОНОВАЛОВ**



**Анатолий ЕГОРОВ, Канаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – АПК организацийĕсемпе çыхăну йĕркелекен пай пуçлăхĕ:**

– Ытларах хресчен-фермер хуçалăхĕсем, ял çыннисем сурăха какайĕшĕн усраççĕ. Эпĕ пĕлекен фермер Мускавсемпе çыхăну тытать. Лайăх ресторансем путексене хапăл иккен. Саккас килсех тăрать. Халĕ утă нумай, продукци хăй хаклăхĕ пысăк мар. Çамрăксем çавăнпах пулĕ сурăха тĕллевлĕн ĕрчетеççĕ.



**Зоя ФЕДОРОВА, Етĕрне район администрацийĕн тĕп специалисчĕ:**

– Сăр тăрăхĕ улăхçаранпа пуян. Халăх çулленех утă нумай хатĕрлет. Çавăнпа та 10 çул каялла çеç пĕрле-шӳллĕ хуçалăхсем те, уйрăм çынсем те сурăх йышлă усранă. Колхоз-совхоз салансан витесем хупăнчĕç, йыш чакрĕ. Кăçалхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ял халăхĕн 7700 пуç шутланать. Сурăх ашĕн хăй хаклăхĕ пĕчĕк. Яшка валли те, шашлăк е хашлама хатĕрлеме те каять. Шел, çăмне, тирне йышăнма пăрахрĕç. Унччен тир тăвакансем пурччĕ, халĕ – çук. Çавăнпах унтан çĕленĕ кĕрĕке тăхăнакан сахалланчĕ. Çăмран кăçатă тăваççĕ, чăлха-алсиш çыхаççĕ.



**Нина ПЕТРОВА, Красноармейски районĕнчи «Таябинка» агрофирмăн тĕп зоотехникĕ:**

– Ĕлĕк ăна килĕренех усранă, кĕтĕве янă. Çу каçипе те выльăх çинчен шухăшламан. Халĕ кĕтӳçе кăнтăрла хунарпа шыраса тупаймăн. Хамăрăн черетпе пăхмалла. Анчах шалуллă çынсен ĕç кунĕсене çухатас килмест. Выльăх шучĕ чакни çакăнпа та çыхăннă. Тирĕпе çăмне ниçта та йышăнманни те тарăхтарать. Хатĕрлев кантурĕсем кирлех. Кĕрĕке промышленноç никĕсĕ çинче паха хатĕрлемелле. Ăшă та çăмăл пултăр вăл. Ăна вара черет тăрсах туянĕç.



**Людмила БОЯРИНОВА, Муркаш районĕнчи выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин ертсе пыракан веттухтăрĕ:**

– Вун-вун çул каялла сурăх чăнласах йышлăччĕ. Ĕнепе, сыснапа танлаштарсан пĕчĕк выльăх вăл, какайĕ 12-15 килограмран ытла мар. Çулла тирпейлеме шăпах вырăнлă. Питравра е ял уявĕсенче шӳрпе пĕçерессĕ. Ĕлĕкрех, шăнтмăш пулман вăхăтра, шăрттан хатĕрленĕ.

Юлашки çулсенче пирĕн районта сурăх усрама тытăнчĕç. Пăхма кĕтӳçсене ятарласа тытаççĕ. Ялта выльăх çăмĕ вырнаçать. Тивĕçлĕ канăва тухнă кинемейсем хĕл кунĕсенче ĕççĕр хăшкăлмаççĕ: çăмран нуски-алсиш çыхаççĕ, килтисене вĕсемпе тивĕçтереççĕ, ытлашшине пасарта сутса укçа тăваççĕ.

Хушма кăларăм

# Вĕрентӳ



ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## Тăван чĕлхе кирлĕлĕхĕ нульпе танлашмĕ-и?

### Шкулăн паянхи программинче наци компоненчĕ валли вырăн хĕсĕнсех пырать

***Раççейри вĕренӳ тытăмĕ тĕрлĕ саманара темĕнле реформăна та тӳснĕ. Улшăнусен усăлăхĕ яланах пулнă-и – татса калама йывăр. Паян мĕн пулса иртни вара – куç умĕнче. Пахалăхлă вĕренӳ патне ăнтăла-ăнтăла «модернизаци» сăмах асăннă тытăмăн ведомство пуçлăхĕсен анчах мар, ахаль вĕрентекенĕн чĕлхи çинчен те кайми пулчĕ. Çĕр-шывăмăрта та, республикăра та пĕлтĕр «Вĕренӳ çинчен» саккун çĕнелчĕ. Пĕлӳ паракан учреждениесем федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсене пăхăнса хăйсен ĕçне йĕркелесе пыраççĕ…***

***Пахалăхлă пĕлӳ илме патшалăх çирĕп никĕс хывать тĕк ытти – профессионалăн ĕçĕ. Анчах никĕс витĕмĕ кутăнла килсе тухсан?..***




Вулаканăн пуçне минретсех ятăм пулас. Калас сăмахăм – шкулăн паянхи программинче наци компоненчĕ валли вырăн хĕсĕнсех пыни, çакнашкал лару-тăрура тăван чĕлхе, литература пĕлĕвне ӳстерме майсем мĕнле тупмалли çинчен.

Республикăри темиçе районта /Элĕк, Тăвай, Çĕрпӳ/ хăш-пĕр шкул сăнав шайĕнче 5 кунлăх вĕренӳ эрни çине куçнă. Çавна май уроксен шутне чакарас ыйту сиксе тухнă. Хăш предмета катертмелле? Элĕксем кăткăс лару-тăруран тухма çапла май тупнă: ытлашши 3 сехете чăваш чĕлхипе литератури шучĕпе кĕскетнĕ. Çапла хальхи вăхăтра Элĕкри тата асăннă район территорийĕнчи виçĕ шкулта /5 кунлăх эрнене куçнисенче/ вĕрентекенсем чăваш чĕлхипе литературине эрнере пĕр е икĕ сехет кăна «шĕкĕлчеççĕ». Лару-тăру çакнашкал çаврăнса пырас тăк малашне наци чĕлхине мĕнлерех шăпа кĕтет? Нумаях пулмасть ЮНЕСКО пирĕн чĕлхене пĕтсе пыраканнисен йышне кĕртрĕ те – унăн «тĕпчев» кăтартăвне пурнăçлантарма хамăр ирĕкпе хамăрах васкатпăр-и?

Шкул ертӳлĕхĕн çакнашкал йышăнăвĕ /хальхи вăхăтра вĕренӳ программине пĕлӳ учрежденийĕ хăй тĕллĕн çирĕплетет/ йĕркеллĕ-и, саккунпа килĕшсе тăрать-и? Çакна уçăмлатма Элĕк районĕнчи чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕсем ыйтнипе вырăна çитсе килтĕмĕр. Чăн та, кăмăллах мар ыйтупа çула тухнăскерсен /пирĕн ушкăнра Республика вĕренӳ институчĕн ĕçченĕсем Анна Егоровăпа Ирина Софронова, республикăри вĕрентекенсен ассоциацийĕн чăваш чĕлхипе литература секцийĕн ертӳçи Геронтий Никифоров та пулчĕç/ Элĕк вăтам шкулĕн алăк урати урлă каçсанах кăмăл тата хуçăлчĕ: пĕлӳ çурчĕн ертӳлĕхĕ эпир килсе çитесси çинчен пĕлмен те иккен. «Что за делегация? С какими идеями?» – хĕрсех темĕн сӳтсе явакансем патне пырса интересленчĕ администраци членĕсенчен пĕри, каярах пире чăваш чĕлхине шкулта еплерех çул панине хĕремесленсех ăнлантарнăскер. Те витĕмлĕрех пуласса шанчĕ – çакăн çинчен вырăслах тăрăшса тăнкарĕ. Чăвашлăхпа çыхăннă предметсем майĕпен шкул программинчен хĕсĕнсе айккинелле тухнипе танлаштарсан темех те мар-и çакă…

Районти чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕсем çак кун асăннă шкулта методпĕрлешĕвĕн семинарне пухăннăччĕ. Чăн та, Элĕксене республикăра иртекен тĕрлĕ мероприятире, ăмăртура /нацилĕхпе çыхăннисем çинчен пырать сăмахăм/ хастар пулнăшăн мухтас килет. Наци туйăмне вĕренекенсенче чĕртме пултаракан педагог нумай вĕсен йышĕнче. Ахальтен мар шкул сакки хыççăн чăваш филологине, культурологине, журналистикăна малашлăх çулĕ пек суйлакан яшпа хĕр çуллен чылай.

Анчах малашне еплерех пулĕ? Паллах, 6 кунлăх вĕренӳ эрнипех юлнă пулсан пурте хăйĕн еккипе пыратчĕ. Эппин, кирлех-и паянхи шкула эрнен кĕскетнĕ форми? Çакăн çинчен Элĕк шкулĕн директорĕ Владислав Волков /эпир çула тухнă кун вăл вырăнта пулмарĕ, каярах калаçрăмăр/ акă мĕн каларĕ:

– Эпир кăçалхипе иккĕмĕш çул пилĕк кун тытăмĕпе ĕçлетпĕр. Çĕнĕлĕхе йышăнччен ашшĕ-амăшĕпе ыйтăм ирттертĕмĕр. Вĕсен 74 проценчĕ çак йĕркене ырларĕ. Анчах 5 кунлăх эрне тени эпир шăмат кун вĕренӳрен ирĕклĕ пулнине пĕлтермест. Ун чухне – харпăр хăйĕнпе ирттермелли занятисем. Урок тулашĕнчи мероприятисем те çак кун ытларах йĕркелетпĕр. Çав шутра – уйрăм предмета халалланисене те.

Пирĕн тĕп ыйтăва та – уроксене мĕншĕн шăпах чăваш чĕлхипе литератури предмечĕн сехечĕсен шучĕпе чакарни çинчен – хуравларĕ ертӳçĕ. Федерацин вĕренӳ планне пăхăнсан никĕс /базовый/ пая ниепле те чакараймастăн-мĕн. СанПин йĕрки вара çирĕп: 5-мĕшсен пилĕк кунлăх эрнере – 29 сехетрен, 11-мĕшсен 34 сехетрен ытлашши вĕренмелле мар. Уроксене сахаллатас тесен никĕс планра сĕнӳ пур: регион компоненчĕн шучĕпе кăна катертме юрать.

Влаçри çынсем çакнашкал лару-тăрăва мĕнлерех хакласçĕ-ши? Элĕк район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Наталия Николаева хальхи вăхăтра пĕлӳ паракан организацисем вĕренӳ программисене ФГОСпа килĕшӳллĕ хăйсем хатĕрленине, вырăнти хăй тытăмлăх органĕн вĕренӳ графикĕпе планне улăштарма ирĕк çуккине палăртрĕ. Саккунран пăрăнса мĕнле-тĕр утăм тусан Обрнадзор умĕнче явап тытмаллине аса илтерчĕ. «Наци компонентне хĕстересрен федераци шайĕнче çĕнĕлĕх кĕртсен тин хăтăлма пулать», – пĕтĕмлетрĕ вăл сăмахне.

Çапах та Раççей вĕренӳ ведомствинех чăрмантариччен республикăн Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствине асăннă лару-тăру пирки комментари пама ыйтрăмăр. Чăн та, хурав илтиччен самай вăхăт иртсе кайрĕ. Çапах та паллашар-ха унпа:

«РФ Вĕренӳпе ăслăлăх министерствин 2004 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче кăларнă хушăвĕнче пĕлĕве вырăсла /тăван мар чĕлхепе/ паракан вĕренӳ учрежденийĕнче эрнери 6-мĕш вĕренӳ кунне тата вĕренӳ çулĕн тăсăмĕн резервне «Тăван чĕлхе тата литература» предметпа пĕлӳ памашкăн усă курма сĕннĕ. Пилĕк кунлăх эрнене куçнă май вĕренӳ организацийĕн çапла «Тăван /вырăс мар/ чĕлхепе литература» предмета валли уйăрнă сехетсене кĕскетме тивет. Çавна май хальхи вăхăтра Чăваш Енри пĕлĕве вырăс /тăван мар/ чĕлхипе паракан пĕтĕмĕшле вĕренӳ организацийĕсенче «Чăваш чĕлхипе литератури» предмета дистанци йĕркипе те вĕрентессине йĕркелеме меслет сĕнĕвĕсем хатĕрлетпĕр».

Йăлана кĕнĕ вĕренӳ формисенчен майĕпен хăпса урăх картлашка çине куçнă май тăван чĕлхе предмечĕн кирлĕлĕхне «нуль» шайне антарса лартмăпăр-и? Ыйту хальлĕхе усă юлать.

✓ ЭЛĔК ВĂТАМ ШКУЛĔН АЛĂК УРАТИ УРЛĂ КАÇСАНАХ КĂМĂЛ ТАТА ХУÇĂЛЧĔ: ПĔЛӲ ÇУРЧĔН ЕРТӲЛĔХĔ ЭПИР КИЛСЕ ÇИТЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛМЕН ТЕ ИККЕН. «ЧТО ЗА ДЕЛЕГАЦИЯ? С КАКИМИ ИДЕЯМИ?» – ХĔРСЕХ ТЕМĔН СӲТСЕ ЯВАКАНСЕМ ПАТНЕ ПЫРСА ИНТЕРЕСЛЕНЧĔ АДМИНИСТРАЦИ ĔÇЧЕНĔСЕНЧЕН ПĔРИ

■ **Анна КУПРИЯНОВА**

АСЛĂ ШКУЛ

## Çĕнтерӳçĕсем паллă

***Шупашкарти коопераци институтĕнче Атăлçи регионĕсен хушшинчи IV «Университет кĕнеки – 2014» конкурса пĕтĕмлетнĕ.***



«Университетская книга» информаципе аналитика журналĕ йĕркеленĕ конкурса тĕрлĕ хулари /Барнаул, Ирбит, Пермь, Иркутск, Хусан, Краснодар, Йошкар-Ола, Саранск, Чĕмпĕр, Шупашкар т.ыт.те/ 40 ытла аслă тата вăтам професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ заведенийĕ 259 кăларăм /монографи, учебниксемпе вĕрентӳ пособийĕсем, методика кăтартăвĕсем, атлассем, журналсем т.ыт.те/ тăратнă. Паллă ăсчахсенчен, библиотекăсемпе типографисен, издательствăсен ĕçченĕсенчен тăракан эксперт комиссийĕ лауреатсене палăртнă.

«Федерацин Атăлçи округĕнчи издательство ĕç-хĕлĕ – халĕ тата малашлăхра» çавра сĕтел хыççăн конкурс çĕнтерӳçисене чысланă. Пуян содержанилле 17 монографи тата 14 учебникпе вĕренӳ пособийĕ лауреат пулса тăнă. Издательство службисемпе типографисем 13 монографи тата 13 тĕрлĕ кăларăм пахалăхĕшĕн Дипломсене тивĕçнĕ. Ятарлă парнепе – конкурс символĕллĕ кĕленче статуэткăпа – Н.П.Огарев ячĕллĕ Мордва патшалăх университечĕн издательствине чысланă.

Çĕнтерӳçĕсен йышне Чăваш Енри аслă вĕренӳ заведенийĕсен тата издательствăсен кĕнекисем те кĕнĕ. И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕн А.Афанасьевăн «Метод сопряжения конформных отображений в задачах электромеханики» монографине, Шупашкар коопераци институчĕн профессорĕсен В.Андреевăн тата Н.Петренкон «История отечественного государства и права» вĕрентӳ пособине чи лайăх ăслăлăх кăларăмĕ тесе палăртнă.

Чăваш кĕнеке издательсвин «Чебоксары: исторический очерк» монографишĕн тата «Археологическая карта Чувашской Республики» кăларăмшăн; Культура тата искусствăсен институчĕн редакципе издательство пайĕ «Самодеятельное искусство Чувашии /1920-1960-е гг./» монографишĕн, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ «Медицинская и биологическая физика» вĕренӳ пособийĕшĕн; Коопераци институчĕ «Правовое регулирование частной жизни осужденных к лишению свободы» ĕçшĕн конкурс лауреачĕн Дипломĕсене тивĕçнĕ.

Конкурс çавăн пекех коопераци институчĕн библиотекине пуянлатма /çĕнĕ 500 кĕнеке çӳлĕксем çинче вырăн тупнă/ пулăшнă. Çакăн йышши пысăк мероприятисем йĕркелени института ăслăлăх, аслă шкул тата издательство ĕçĕ-хĕлĕнче çĕнĕ партнерсем тупма, ĕçлĕ çыхăнусем йĕркелеме май парать.

■ **Г.ЛОХОНОВА**

ÇИТĔНӲ

## «Пĕлӳ парас ĕçре хамăрăн навигатор пулмалла»

***Сарă çӳçлĕ те илемлĕ çак вĕрентекене курмассерен тавралăх çуталса кайнăн туйăнать. Ку хутĕнче тата кĕрхи ăмăр çанталăкчĕ те – пушшех. Çĕнĕ Шупашкарти 5-мĕш шкулта ют чĕлхесене вĕрентекен Екатерина Михайловна Владимирова пирки сăмахăм. Кăçал республикăра «Çулталăк вĕрентекенĕ» ята тивĕçнĕскер Учитель кунĕ умĕн конкурсăн Раççейре иртекен пĕтĕмлетӳ тапхăрне хутшăнчĕ. Мускав облаçĕнчи Мытищи хулинче хĕрӳ тупăшу темиçе куна тăсăлнă. Екатерина 80 ытла педагог ушкăнĕнче хăйĕн пултарулăхне кăтартса «Раççей çулталăк вĕрентекенĕ – 2014» финалне тухнă. Çапла 15 лауреат йышне вăл та кĕнĕ. Çул çӳрев хыççăн пуçаруллă вĕрентекене хамăрăн темиçе ыйтупа чăрмантартăмăр.***

**– Мĕнлерех кăмăлпа таврăнтăр Мускавран?**

– Конкурса çав тери пысăк шайра хатĕрленнĕрен чунра ырă туйăмсем кăна хуçаланчĕç. Кирек мĕнле ăмăрту та шалти хумханупа çыхăннă. Анчах çакна «саплаштарма» пирĕн çул çӳреве меллĕ йĕркелеме пĕлнĕ: кăсăклă экскурсисенче пултăмăр. Сăмахран, Сергий Посадне, Ремесласен музейне çитсе куртăмăр. Çĕр-шыври паллă вырăнсенче пулни тавра курăма аталантарать – педагогшăн ку питĕ паха.

**– Професси пултарулăхне мĕнле майпа çирĕплетме тиврĕ?**

– Паллах, жюри малтанах пирĕн ĕçе кăтартакан видеоматериалпа паллашнă. Мытищи хулинчи пĕр шкулта палламан ачасен класĕнче урок ирттертĕмĕр. Педканашсенче – вĕсем тĕрлĕ темăпа иртрĕç – хамăра кăтартмалла пулчĕ. Çийĕнчен педагог проектне – ăна кашни харпăр хăй хатĕрленĕ – хӳтĕлерĕмĕр. Сăмах май, жюри членĕсен ырă сунăмне, тĕрĕс хаклас туртăмне палăртса хăварас килет.

**– Çĕнтерейменшĕн кăмăл хуçăлмарĕ-и?**

– Раççей – мĕн тери пысăк! Миçе регион, пысăк хула! Вырăнта çĕнтерӳçĕ ятне илнĕ кашни çын професси тĕлĕшпе чăн та ăста. Вĕсемпе тĕл пулса пĕрле хутшăнни мĕне тăрать! Пултарулăхпа çыхăннă ĕçре çакăн усăлăхĕ питĕ витĕмлĕ. Çитменнине – санран та ĕçтешсем мĕне те пулин вĕренни хăпартлантарать. Çĕнтерӳ хунарне алла тытма ĕлкĕрĕпĕр-ха – ĕмĕтсем пăчланман вĕт. Тупăшу пынă вăхăтра хама хавхалантарса тĕрев панăшăн юратнă коллектива, вĕренекенĕмсене, республика ертӳлĕхне, Чăваш Енри вĕренӳ ĕсченĕсен профсоюз организацине, туссемпе тăвансене – пурне те пысăк тав!




**– Пурнăçра пысăк улшăну пуласса кĕтетĕр: кĕçех сирĕн çемьене «пĕрремĕш кайăк» вĕçсе килĕ. Шкул ачисен, сире чунтан юратакан вĕренекенĕрсен, чылай вăхăт тунсăхламалла пулĕ-и?**

– Ача çуратасси – яваплă утăм. Çыннăн сывлăх енчен кăна мар, кăмăл-туйăмпа та хатĕрленсе çитмелле. Декрет канăвĕ çинчен калаçма иртерех пулин те хамăн юратнă ĕçшĕн хăвăрт тунсăхлама пуçлассăн туйăнать. Пурте йĕркеллĕ пулсан – вĕренекенĕмсене нумай кĕттермĕп.

**– Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев нумаях пулмасть сире пултарулăхăра кура хаклă парне илмелли сертификатпа хавхалантарчĕ – сирĕн çемьешĕн асра юлмалли парне пултăрччĕ.**

– Эпĕ кашни япаланах, парнене – пушшех, хаклатăп. Çитĕнӳсем те – пĕчĕкки те, пысăкки те – маншăн пĕр пекех хаклă. Нимĕнле салтак та тӳрех генерал пулаймасть. Çавăнпа та учитель профессине суйланă çамрăксене, пĕрремĕш уроксем ирттерекенсене, тĕллевлĕн малалла талпăнма сунатăп. Пултарулăх ăнăçăвĕ патне стандартсем çине таянса ĕçленипе кăна çитме çук, вĕренӳ навигаторĕ те пулмаллах.

■ **Ирина ПУШКИНА калаçнă**

## «Тыр-пул тухăçĕ – ял çыннин канăçсăрлăхĕ»

«Çăкăртан асли çук», – тесе ахальтен каламан ваттисем. Сĕтел çине те ытти апат-çимĕçе лартиччен чи малтанах çăкăрпа тăвар лартаççĕ. Çăкăр – пирĕн пурнăç, халăх пуянлăхĕ. Вăл авалтанах халăхра пысăк хисепре пулнă. «Умăнтан çăкăр ан татăлтăр», – тенĕ çынсем пĕр-пĕрне ырă сунса.

Вăрмар поселокĕнчи «Березка» ача садĕнчи аслă ушкăна çӳрекен ачасене паха çак çимĕç сĕтел çине килсе выртиччен уншăн мĕн чухлĕ çын тăрăшнине, техника ĕçленине ăша хывма, çăкăрăн кашни тĕпренчĕкне упрама вĕрентеççĕ. Ачасемпе çуркунне ака вăхăтĕнче уя тухса сăнав ирттертĕмĕр. Тыр-пул тухăçĕ çĕре мĕнле сухаланинчен килнине питĕ лайăх ăнланаççĕ штурвала çирĕп тытса пыракан трактористсем. Ака вăхăтĕнчи вĕсен ĕç-хĕлĕпе паллашнă май ачасем воспитатель ăнлантарса панине тимлĕн итлеççĕ.

Çу кунĕсем вĕçленсе пынă чухне чи пысăк ĕç – вырма – пуçланать. Пулса çитнĕ тыр-пула пухса кĕртнине те уй-хире тухса сăнарăмăр. Комбайн тырă пуссинче мăнаçлăн çӳрет, вăл çаврăнса çитес вырăнта машина кĕтсех ларать. Уй-хир «карапĕ» бункера тулнă ылтăн тĕслĕ тырра кузова пушатать. Пире курса агроном çывăхарах килчĕ. Вăл тырра ăçта ăсатнине тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Акă ачасен куçĕ умĕнчех машина йĕтем еннелле çула тухать…



Çăкăр чĕлли – хĕвел шевли, ăшă çумăрăн кĕмĕл тумламĕсем, çуллахи тӳлек çил варкăшĕ, ял ĕçченĕсен канăçсăр ĕçĕ-хĕлĕ, вăй-халĕ. Тыр-пул çитĕнтерсе мĕн пур халăха тăрантаракан çын вăл – чăннипех улăп паттăр, тĕнчери хисеплĕ çын. Ачасене çак шухăша ăша хывтарнă май çăкăр завочĕн ĕçченĕсем патне кайса лайăх концерт кăтартрăмăр.

■ **Ирина МИХАЙЛОВА**

**Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

КУН-ÇУЛ

# Мăшăр хăма та саваланă, кукăль те пĕрлех пĕçернĕ

## Мулендеевсен ачисем те ашшĕ-амăшĕ пекех пултаруллă

***«Талантлă çын пур енĕпе те ăста»,– тесе ахальтен каламан пулĕ. Кирек хăш ĕçе пикенсен те пултарать вăл. Вăй-хăвачĕ ăçтан тухать-ши, чун хавалĕ епле çитет-ши тесе тĕлĕнетĕн вара. 1930 çулта Нăрваш Шăхальте çут тĕнчене килнĕ Андрей Мулендеев ăста специалист пулнă. Андрей Сергеевич платник, столяр ĕçне те пултарнă, çав вăхăтрах кирпĕч купаланă, сĕтел-пукан ăсталанă, купăс каланă, хурт-хăмăр тытнă. Çĕр ĕçне те шутсăр кăмăлланă. Паллах, нумай ĕç вăрттăнлăхне хăйĕнчен аслă ăстасенчен вĕреннĕ.***



«Атте нумай ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕпе амăшĕ /Сергей Ивановичпа Ольга Петровна/ вăтам хресченсем шутланнă. Çĕр-шывра колхозсем йĕркеленнĕ вăхăтра вĕсен хуçалăхĕ тĕреклĕ те çирĕп пулнă. Мулендеевсем те ыттисемпе пĕрлех колхоза кĕнĕ. Колхоз ĕçне хастар хутшăннă. Атте те пĕчĕкрен ĕçе кӳлĕннĕ. Ачаранах пуртăпа, мăлатукпа, савапа, пăчкăпа ĕçлеме юратнă. Малтанах пĕчĕк хăма татăкĕсенчен теттесем ăсталанă. Каярах йывăçран савăт-сапа тума вĕреннĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан асаттене фронта илсе кайнă. Йывăр çак тапхăрта мĕн пур ĕç асаннепе ачисем çине тиеннĕ. Мĕн кăна тӳсмен-ши вĕсем ун чухне? Сиввине те, выçлăхне те, хурлăхне те, нуши-асапне те чăтса ирттернĕ. Атте те çемйине вăй çитнĕ таран пулăшнă. Вăл килĕнче виççĕмĕш ача пулнă. Кăштах та пулин пулăшу пултăр тесе вăл çынсене сехет тӳрлетсе, кивĕ тирĕк-чашăка сапласа, юсаса панă. Каярах йывăçран савăт-сапа тума вĕреннĕ. Хаяр вăрçă вăхăтĕнче вăкăр кӳлсе ĕçленĕ, вăрман турттарнă. Вун пиллĕкре чухнех вăл хĕр тупри хумалли арча тума вĕреннĕ. Хăйсен ялĕнчи больницăра ĕçлекен хĕрсене арчасем ăсталаса панă. Çав вăхăтрах чӳрече рами те, япала çумалли валашка та, кĕвенте таврашне те тума тытăннă. Хурт-хăмăр та тытнă», – çапла аса илет паян ашшĕне хĕрĕ Нина.

1958 çулта Андрей Мулендеев Антонина Черноглазовăпа çемье çавăрнă. Çулталăкранах вĕсем хăйсем валли пĕчĕк çурт лартса уйрăлса тухнă. 1962 çулта вара пысăкрах йывăç çурт çĕкленĕ. Мулендеевсем çурт латма хăмисене те хăйсемех алă вĕççĕнех савалană. Кăнтăрла колхозра ĕçленĕ, кайран килти ĕçсене тунă. Каçсерен Андрей Сергеевич хăйне килĕшекен ĕçпе аппаланнă. Чӳрече рами, сĕтел-пукан, çурт эрешĕсем тунă. Çак ăсталăха вăл хăйсенчен инçех мар пурăнакан Александр Мулендеевран вĕреннĕ. Мĕн пĕлменнине йăлтах Санькка тетерен /ялта ăна пурте çапла чĕннĕ/ ыйтнă. Ăна кура инструментсем, токарь станокне ăсталанă. Кун пек станок вăл вăхăтра ялĕпе те 2-3 çеç пулнă.

Шупашкарти гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ Юрий Исаев каласа панă тăрăх – Андрей Сергеевич Мулендеев нумай çул колхоз стройкинче вăй хунă, строительсен бригадине ертсе пынă. Çав бригадăпа вĕсем 18 объект хута янă: выльăх-чĕрлĕх усрамалли витесем, правленин икĕ хутлă çуртне, клуб, палăксем, механизаторсен çурчĕ тата ытти те. Унсăр пуçне район стройкинче те ĕçленĕ. Патăрьелти тĕп больницăна, СПТУ, сĕт-çу завочĕ тунă çĕрте вăй хунă. Мăшăрĕ те унпа пĕр бригадăрах вăй хунă. Ку çеç-и? Вăл тăван ял тата кӳршĕ ял çыннисем валли те тем те пĕр ăсталанă. Çĕр-çĕр саккаса колхозран килсен пурнăçланă. Вĕсен шутĕнче – çурт эрешĕсем, вĕллесем, сĕтел-пукан, шкап, йывăç кравать, кĕреçе-çава, пуртă аврисем, тата ытти те. Нумай чухне укçасăрах туса панă.

Канмалли кунсенче ахаль ларман вăл. Колхозра каменщиксен бригадирĕ пулнă май ял çыннисем валли пӳрт купаланă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче ялсенче çуртсене кирпĕчрен тума пуçланă. Ун чухне каменщиксем нумай пулман. Константин Иванов, Петр Груздев, Мария Митрофанова тата Андрей Мулендеев çак ăсталăха алла илнĕ. Платник ĕçĕсене ытларах мăшăрĕпе пĕрле Антонина Александровнăпа тунă. Пӳрт тăррисене витме аслă ывăлĕсем – Валерийпе Николай – нумай пулăшнă. Ун чухне вĕсем шкулта вĕреннĕ. Хăйĕн ĕмĕрĕнче Андрей Сергеевич мĕнле кăна ĕç туман-ши? Кăмака та купаланă, тимĕртен шетниксем, витресем, валаксемпе пăрăхсем ăсталанă, хăваран карçинккасем, витресем авнă. Çăка хăвалĕнчен чĕрессем те тунă. Ытларах пыл чĕресĕ меллештернĕ.

Мулендеевсем 5 ача пăхса ӳстернĕ. Юрра-кĕвве ăстаскерсем ачисене те купăс, балалайка калама хăнăхтарнă. Купăсне Андрей Сергеевич ашшĕпе пĕр тăван ачисенчен Кольăран, Володьăран, Тольăран вĕреннĕ. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тенешкел Мулендеевсен ачисем те ашшĕпе амăшĕ пекех пултаруллă та ăста, ĕçчен те сăпайлă, тараватлă та ăш пиллĕ. Вĕсен аслă ывăлĕ Валерий Шупашкарти В.Ярды ячĕллĕ спорт шкулĕн директорĕ. Вăл пĕчĕкрен спортпа туслă пулнă, каярах велосипедпа чупса çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тунă, «СССР спорт мастерĕ» ята тивĕçнĕ. Вĕсем мăшăрĕпе Генриеттăпа пĕр ывăлпа икĕ хĕр пăхса ӳстернĕ. Ачисем те тăрушăллă та ĕçчен. Ывăлĕ Андрей Чул хулари ШĔМ академине тата Мускаври кооперации университетне пĕтернĕ. Халĕ – полиции майорĕ, хĕç-пăшалпа усă курма лицензи паракан инспекторта вăй хурать. Мăшăрĕ Лидия Геннадьевна çав университетах пĕтернĕ, халĕ ЧР Физкультурăпа спорт министерствинче бухгалтерта ĕçлет. Вĕсем икĕ хĕр – Аньăпа Василиса – ӳстереççĕ. Мулендеевсен хĕрĕ Анастасия И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра стоматологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă, Мускаври стоматологи университетĕнче ординатура пĕтернĕ. Халĕ шăл тухтăрĕнче вăй хурать, çав вăхăтрах студентсене те пĕлӳ парать. Унăн мăшăрĕ Геннадий Петрович «Атăл» çул-йĕр хуçалăхĕн экспёрчĕ. Кĕçĕн хĕрĕ Ольга виçĕ аслă пĕлӳ илнĕ, халĕ Мускавра реклама агентствинче ĕçлет. Ывăлĕ Николай И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ пĕтернĕ хыççăн Чĕмпĕрте ĕçлесе пурăнать. Вĕсем мăшăрĕпе Оксанăпа 2 ывăл пăхса ӳстернĕ. Евгенийпе Сергей инженер-программистсем. Елена Мускавра ĕçлесе пурăнать. Мăшăрĕпе пĕр ывăл ӳстернĕ. Сергей компьютерсемпе кăсăкланать. Нина И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра пĕлӳ илнĕ. 20 çул ытла Шупашкарти 2-мĕш гимназире ачасене вĕрентет. Мăшăрĕпе Владимирпа пĕр ывăл ӳстереççĕ. Гена Патăрьелте пурăнать. Мăшăрĕпе Анфисăпа 2 ывăл ӳстереççĕ. Максим – И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн стоматологи факультечĕн 4-мĕш курс студенчĕ, Павел шкулта вĕренет. Мулендеевсен çемйи, чăн та, питĕ пысăк тата туслă. 2013 çулта Антонина Александровнăпа Андрей Сергеевич Мулендеевсем пĕрлешнĕренпе 55 çул çитнине паллă тунă. Вĕсене ЧР Пуçлăхĕн Указĕпе «Юратупа шанчăклăхшăн» орденпа чысланă. Шел те, нумай пулмасть Андрей Сергеевич пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Мулендеевсен çемйи ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче. Кунта аслисем кĕçĕннисене вĕрентсе пыраççĕ. Кĕçĕннисем аслисене хисеплеççĕ, сума сăваççĕ.

✓ ВУН ПИЛЛĔКРЕ ЧУХНЕХ ВĂЛ ХĔР ТУПРИ ХУМАЛЛИ АРЧА ТУМА ВĔРЕННĔ. ХĂЙСЕН ЯЛĔНЧИ БОЛЬНИЦĂРА ĔÇЛЕКЕН ХĔРСЕНЕ АРЧАСЕМ ĂСТАЛАСА ПАНĂ. ÇАВ ВĂХĂТРАХ ЧӲРЕЧЕ РАМИ ТЕ, ЯПАЛА ÇУМАЛЛИ ВАЛАШКА ТА, КĔВЕНТЕ ТАВРАШНЕ ТЕ ТУМА ТЫТĂННĂ

■ **Анна АНАТОЛЬЕВА.**
Патăрьел районĕ.

**Автортан.** *Материала хатĕрлеме пулăшнăшăн Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорне Юрий Исаева тав тăватăп.*

ШЫРАÇÇĔ

# Тупма пулăшăр



РФ Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи Следстви управленийĕн Шупашкарти уйрăмĕ РФ УК 30 статйин 3 пайĕпе – 105 статйин 2 пайĕпе пăхнă преступленишĕн пуçарнă уголовлă ĕçе малалла тĕпчет. Аса илтеретпĕр: следстви версийĕ тăрăх – 2014 çулхи юпан 7-мĕшĕнче 15 сехет те 40 минут тĕлĕнче тĕп хулари Стрелоксен 324-мĕш дивизийĕн урамĕнчи 8-мĕш çуртăн пĕрремĕш подъезчĕн пĕрремĕш хутĕнче палламан арçын 13 çулти хĕр ачана тапаннă. Телее, хĕр ача хăтăлма пултарнă. Усал шухăшлă çын преступлени вырăнĕнчен тарса çухалнă.

Хальхи вăхăтра следстви преступникăн фотороботне хатĕрленĕ. Арçын 25-40 çулсенче, 170-175 сантиметр çӳллĕш, хытанка пӳ-силлĕ, тĕттĕм /ахăртнех, хура/ çӳçлĕ. Тĕттĕм тĕслĕ куртка /çаннисем – çутăрах/, тĕттĕм джинс шăлавар, тĕттĕм тĕслĕ пушмак, шурă нуски тăхăннă. Пуçĕнче – умĕнче шурă ӳкерчĕклĕ тĕттĕм тĕслĕ бейсболка, аиккисене шурă пусма татăкĕ кĕртсе çĕленĕ. Арçыннăн хăйпе пĕрле хул пуççи урлă çакса ямалли диагональпе çутă йĕрсем çĕленĕ хура сумкка /портфель, сумкка-планшет/ пулнă.

Шыракан çак çын пирки мĕн пĕлнине 66-24-88, 66-24-31 /СУ криминалистика уйрăмĕ/ е 02 /полици/ телефонпа пĕлтерме ыйтаççĕ.

## Тем те пĕр

**● Çурçĕр Корейăри çулсем çинче машина питĕ сахал – çавăнпа ашшĕ-амăшĕ ачи-пăчине транспорт çӳрекен вырăнах выляма ярать.**

**●Франци çыравçи Виктор Гюго çаппа-çарамасланса хăйĕн тарçисене пĕрре кăна мар тĕлĕнтернĕ. Вĕсене вăл тумне палăртнă вăхăт çитмесĕр таварса пама хушман. Çакнашкал тĕлĕнмелле мел пулăшнипе классик ĕçе пуçĕпех путасшăн пулнă, килĕнчен тухас темен.**

**● Яппунсем – çав тери вăтанчăк халăх: вĕсен чĕлхинче «эпĕ сана юрататăп» тесе каласси йăлана кĕмен. Ку халăха çапла пуплеме питĕ йывăр, çак утăма тăвакансене унта чун-чĕререн хисеплеççĕ, вĕсем чăн-чăн паттăрсем шутланаççĕ.**

**Яппун арçынни юратни çинчен, качча тухма ыйтса хĕрпе çапларах калаçать: «Ман валли яшка пĕçерес килмест-и?» е «Эсĕ манăн кĕпе-тумтире çума пултаратăн-и?»**


РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

**ПРОДАЮ**

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу, щебень, керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**654.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Д-ка. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**655.Кольца колодезные** – диам. 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Доставка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.


*Саламлатпăр*

***Ĕç тата спорт ветеранне, Тюмень облаçĕнчи чăвашсене нумай çул ертсе пыракан, «Хыпар» хаçата 80-мĕш çулсенчен пуçласа çырăнса илекен <u>Анатолий Иванович АРХИПОВА,</u> Красноармейски район çыннине, 65 çул тултарнă ятпа саламлатпăр! Çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр.***

***<u>Ĕçри, спортри тусĕсем.</u>***

**1.** Торги проводит администрация Таушкасинского сельского поселения Цивильского района Чувашской Республики на основании постановления администрации Таушкасинского сельского поселения Цивильского района **№ 78 от 15.10.2014 г.**

**2. Предмет торгов: право аренды на земельные участки из земель сельскохозяйственного назначения сроком на 49 лет:**

**Лот 1** - площадью 1939200,00 кв. м., с кадастровым номером 21:20:080901:584, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Таушкасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства.
Начальная (стартовая) цена 60100 (шестьдесят тысяч сто) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 3005 (три тысячи пять) рублей 00 копеек.
Сумма задатка 12020 (двенадцать тысяч двадцать) рублей 00 копеек.

**Лот 2** - площадью 303000,00 кв. м., с кадастровым номером 21:20:080901:585, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Таушкасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства.
Начальная (стартовая) цена 10170 (десять тысяч сто семьдесят) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 508 (пятьсот восемь) рублей 50 копеек.
Сумма задатка 2034 (две тысячи тридцать четыре) рубля 00 копеек.

**Лот 3** - площадью 253500,00 кв. м., с кадастровым номером 21:20:180301:442, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Таушкасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства.
Начальная (стартовая) цена 8560 (восемь тысяч пятьсот шестьдесят) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 428 (четыреста двадцать восемь) рублей 00 копеек.
Сумма задатка 1712 (одна тысяча семьсот двенадцать) рублей 00 копеек
Ограничения и обременения отсутствуют.

**3.** Критерий определения победителя - максимальный размер цены, предложенный за предмет торгов.

**4.** Дата и время проведения аукциона: **1 декабря 2014 г. в 10 час.00 мин.**

**5.** Место проведения аукциона: Чувашская Республика, Цивильский район, д. Таушкасы, ул. Школьная, 6.
<u>Адрес электронной почты: sao-taush@zivil.cap.ru, номер контактного телефона 8(83545) 64-9-25</u>

**6. Условия проведения аукциона:** Шаг аукциона 5%, задаток - 20% от первоначальной цены предмета торгов.
Способ продажи - аукцион.
Форма подачи предложений о цене открытая.
Критерий выявления победителя аукциона - максимальный размер цены предмета торгов.
Дата начала приема заявок 28 октября 2014 г.
Дата окончания приема заявок 28 ноября 2014 г. до 10 часов 00 минут.
Задаток должен быть перечислен не позднее 28 ноября 2014 г.
Прием заявок на участие в аукционе осуществляется по рабочим дням с 08.00 до 17.00 по адресу: Чувашская Республика, Цивильский район, д. Таушкасы, ул. Школьная, 6.
Справки по тел, 8(83545) 64-9-25. <u>Интернет-сайт на котором размещена документация об аукционе: http://gov.cap.ru/</u>
Определение участников аукциона состоится в администрации Таушкасинского сельского поселения Цивильского района Чувашской Республики 28 ноября 2014 г. в 16 час. 00 мин.
Регистрация участников аукциона проводится 1 декабря 2014 г. с 09.20 до 09.45 по адресу: Чувашская Республика, Цивильский район, Таушкасы, ул. Школьная, 6.
По вопросу осмотра земельных участков обращаться в администрацию Таушкасинского сельского поселения.

**8.** Банковские реквизиты для перечисления задатка:
<u>Реквизиты счета для оплаты задатка:</u> Получатель финансовый отдел администрации Цивильского района, р/с № 40302810575180000003 в Чувашское ОСБ № 8613 г. Чебоксары, БИК 049706609, ОКТМО 97641468, ИНН 2115903002, КПП 211501001, кор./сч. 30101810300000000609, л/с 05173ЧПР012 Администрации Цивильского района. Наименование платежа - залоговая сумма на участие в торгах 28.11.2014 г.

**Перечень документов, предоставляемых претендентами для участия в аукционах:**
1) заявка на участие в аукционе, установленного образца - в двух экземплярах;
2) платежный документ, с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение задатка с указанием реквизитов счёта для возврата задатка и опись представленных документов;
3) при подаче заявки физическое лицо предъявляет документ удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность;
4) юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельство о государственной регистрации юридического лица, а так же выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент).
Порядок возврата задатка:
- в случае отзыва заявки на участие в аукционе, до даты признания заявителя участником аукциона, задаток возвращается в течение 3 рабочих дней со дня поступления уведомления об отзыве заявки;
- в случае если аукцион не состоялся, задаток возвращается в течение 3 рабочих дней со дня подведения итогов аукциона
- в случае если заявитель аукцион не выиграл, задаток возвращается заявителю в течение 5 рабочих дней со дня подведения итогов аукциона.
Обязательство победителя аукциона - заключение договора аренды земельного участка в течение пяти дней со дня проведения аукциона.
Организатор аукциона имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 3 дня до его проведения.

**ДОГОВОР №**
**аренды земельного участка**

д.Таушкасы "__"__________2014 года

Администрация Таушкасинского сельского поселения Цивильского района Чувашской Республики, ИНН 2115903299, КПП 211501001, ОГРН 1052137022178, расположенная по адресу: Чувашская Республика, Цивильский район, д. Таушкасы ул. Школьная д.6 в лице главы администрации Таушкасинского сельского поселения Александровой Галины Геннадьевны, действующего на основании Устава, именуемая в дальнейшем "Арендодатель", и (Ф.И.О. гражданина или наименование юридического лица), ИНН_________, ОГРН__________, КПП_________, юридический адрес:________, в лице ____________, именуемый в дальнейшем "Арендатор", и именуемые в дальнейшем "Стороны", заключили настоящий договор (далее - Договор) о нижеследующем:

**1. Предмет договора**
1.1. Арендодатель предоставляет на основании постановления главы администрации от _____20__г. № , а Арендатор принимает в аренду сроком на ____ лет земельный участок из земель (категория земель), площадью _____ кв. м, с кадастровым номером 21:20:_____, местоположением: (адрес участка), для (разрешенное использование).
Границы Участка указаны в кадастровом паспорте от __ 20___г. № _______, выданном Филиалом федерального государственного бюджетного учреждения "Федеральная кадастровая палата Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии" по Чувашской Республике - Чувашии.

**2. Срок договора**
2.1. Срок аренды земельного Участка устанавливается с "__" 20__год по "__" 20__год.
2.2. Договор вступает в силу с даты его подписания Сторонами и государственной регистрации.

**3. Размер и условия внесения арендной платы.**
3.1. Размер арендной платы за использование земельного участка за каждый год составляет ___________руб.______коп.(на основании протокола торгов по предоставлению в аренду земельного участка от № ).
3.2. Первоначальная арендная плата за первый год аренды вносится путём перечисления всей суммы аренды, указанной в п.3.1. в течение 5 дней со дня подписания протокола торгов. В остальной части, по истечению одного года арендная плата вносится Арендатором ежеквартально равными долями до 10 числа последнего месяца квартала путем перечисления на счет **УФК по Чувашской Республике** <u>(Администрация Таушкасинского сельского поселения Цивильского района Чувашской Республики)</u> **№ 40101810900000010005 в ГРКЦ НБ Чувашского Республиканского банка России г. Чебоксары, ИНН 2115903299, КПП 211501001, ОКТМО 97641468, БИК 049706001, КБК 993111 05025100000120, статус 08.л/с № 04153002660.**
Исполнение обязательств по внесению арендной платы является поступление денежных средств на расчетный счет, указанный Арендодателем.
3.3. Размер арендной платы может пересматриваться не более одного раза в год. Он может быть пересмотрен Арендодателем в одностороннем порядке в случаях изменения базовой ставки арендной платы либо официально принимаемых коэффициентов к ставкам арендной платы и в других случаях, предусмотренных законодательными актами, актами органов местного самоуправления.

**4. Права и обязанности Сторон**
**4.1 Арендодатель имеет право:**
4.1.1.Требовать досрочного расторжения Договора при использовании земельных участков не по целевому назначению, а также при использовании способами, приводящими к его порче, при не внесении арендной платы более чем за 6 месяцев, в случае не подписания Арендатором дополнительных соглашений к Договору в соответствии с п. 3.3 и нарушения других условий Договора.
4.1.2. В одностороннем порядке расторгнуть настоящий договор, в случае неуплаты арендатором суммы арендной платы за первый год аренды в соответствии с п. 3.2. настоящего договора.
4.1.3. На беспрепятственный доступ на территорию земельных участков с целью его осмотра на предмет соблюдения условий Договора.
**4.2. Арендодатель обязан:**
4.2.1. Выполнять в полном объеме все условия Договора.
4.2.2. Письменно в десятидневный срок уведомить Арендатора об изменении своих реквизитов для перечисления арендной платы, указанных в п.3.1.
4.2.3. Своевременно передать Арендатору земельные участки.
4.2.4. Своевременно производить перерасчет арендной платы и информировать об этом Арендатору.
**4.3. Арендатор имеет право:**
4.3.1. Использовать Участки на условиях, установленных договором.
4.3.2. С согласия Арендодателя сдавать Участок в субаренду, а также передавать свои права и обязанности по договору третьим лицам при заключении договора на срок более 1 года.
4.3.3. По истечении срока действия Договора в преимущественном порядке перед другими лицами заключить договор аренды на новый срок на согласованных Сторонами условиях по письменному заявлению, направленному Арендодателю не позднее, чем за три месяца до истечения срока действия Договора.
**4.4. Арендатор обязан:**
4.4.1. Выполнять в полном объеме все условия Договора.
4.4.2. Использовать Участки в соответствии с целевым назначением и разрешенным использованием.
4.4.3. Не допускать загрязнение, захламление, деградацию и ухудшение плодородия почв на земельном участке.
4.4.4. Уплачивать в размере и на условиях, установленных Договором, арендную плату.
4.4.5. Обеспечить Арендодателю (его законным представителям), представителям органов государственного земельного контроля доступ на Участок по их требованию.
4.4.6. Письменно сообщить Арендодателю не позднее, чем за один месяц о предстоящем освобождении Участка как в связи с окончанием срока действия Договора, так и при досрочном его освобождении.
4.4.7. Не допускать действий, приводящих к ухудшению экологической обстановки на арендуемых земельных участках и прилегающих к ним территориях.
4.4.8. Письменно в десятидневный срок уведомить Арендодателю об изменении своих реквизитов.

**5. Особые условия**
5.1. За нарушение условий Договора Стороны несут ответственность, предусмотренную законодательством Российской Федерации.
5.2. Ответственность сторон за нарушение обязательств непреодолимой силы, регулируется законодательством Российской Федерации.

**6. Изменение, расторжение и прекращение Договора**
6.1. Все изменения и (или) дополнения к Договору оформляются Сторонами в письменной форме.
6.2. При прекращении Договора либо отказа от его дальнейшего продления Арендатор обязан в 60-тидневный срок вернуть Арендодателю Участок в надлежащем состоянии.

**7. Рассмотрение и урегулирование споров**
7.1. При возникновении споров по настоящему Договору Стороны принимают меры по их урегулированию путем переговоров. Срок ответа на претензию - 45 дней с момента ее получения.
7.2. При невозможности разрешения споров между сторонами путем переговоров они подлежат разрешению в соответствии с законодательством Российской Федерации.

**8.Заключительные положения**
8.1. Уступка права требования по настоящему Договору возможна только с письменного согласия другой стороны.
8.2. Срок действия договора субаренды не может превышать срок действия Договора.
8.3. При досрочном расторжении Договора договор субаренды земельного участка прекращает свое действие.
8.4. Договор составлен в 3 (трех) экземплярах, имеющих одинаковую юридическую силу, и хранятся: первый экземпляр - у Арендатора; второй у Арендодателя; третий Цивильском отделе Управления Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии по Чувашской Республике.
8.5. Арендатор самостоятельно несёт все расходы, связанные с государственной регистрацией настоящего Договора.

**9. Реквизиты Сторон**
**Арендодатель:** Администрация Таушкасинского сельского поселения Цивильского района Чувашской Республики.
**Адрес:** Чувашская Республика, Цивильский район, д. Таушкасы, ул. Школьная, д. 6
**Арендатор:** (гражданин или юридическое лицо)
**Адрес:** ________________________________________

**10. Подписи Сторон**

**Арендодатель** **Арендатор**
Глава администрации Таушкасинского сельского поселения Цивильского района Чувашской Республики
_______________ Ф.И.О.
_______________ Г.Г.Александрова (гражданина или руководителя)

## СУТАТĂП

**701.Романовски** таса ăратри **пĕтĕ сурăхсем.** Т. 89876668305.

Канашская районная администрация информирует население о предстоящем предоставлении земельного участка с кадастровым номером 21:11:030303:107 площадью 3704 кв. м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Сеспельское. Категория земель - земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование - для сельскохозяйственного производства. Срок аренды - 49 лет.
Желающим приобрести вышеуказанный земельный участок обращаться с заявлением в администрацию Канашского района по адресу: г. Канаш, ул. 30 лет Победы, 87, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 8 (83533)2-84-80.

Администрация Козловского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 10 лет из земель с/хозяйственного назначения с кадастровым номером 21:12:130101:40 площадью 462920 кв.м., расположенного по адресу: Козловский район, СХПК "Волжский", для ведения сельскохозяйственной деятельности.
Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429430, Чувашская Республика, г. Козлова, ул. Ленина, д. 55, каб. 27. Справки по телефону: 8(83534) 21734.

**«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ юпа уйăхĕн 25-мĕшĕнче тухать.**


чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 22.10.2014 алă пусна.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7384. Заказ 4054.